**Мĕншĕн, куккук, хăва тĕмĕнче...**

(романс)

Мĕншĕн, куккук, хăва тĕмĕнче
Куллен-кунах куклатса ларатăн?
Мĕншĕн эсĕ, пирĕн çут тĕнче,
Пĕр уяса, пĕр çилпе улатăн?
Мĕншĕн, хĕвел, ялан пăхмастăн?
Мĕншĕн çумăр кăларса тăлхратăн?
Мĕншĕн, куккук, мана пăхмастăн?
Куллен-кунах тĕм çинче ларатăн.
Эпĕ те сан пекех тăлăххи,
Эпир пĕрле пулса ларар-и?
Санпа манăн шухăшсем пĕр-и?
Пĕр пулсассăн, пĕрле пурнар-и?

1899

*Турхан, Я. Мĕншĕн, куккук, хăва тĕмĕнче... : (романс) / Я. Турхан // Революцичченхи чăваш литератури : текстсем. – Шупашкар, 1984. – Т. 1 : XX ĕмĕрччен. – С. 240.*